**Çынпа хăйăр**

Хăйăр пĕрчиие уйăрса пăхсан, —
Пĕчĕкçĕ пĕрчĕ, пĕччен вăл ним мар;
Çав пĕрчĕсемех купипе выртсан
Вĕсенĕн йышне май çук шутлама.
Хирте çил-тăвăл тухса çавăрсан
Хăйăр хирĕнче йывăр ун пек чух:
Пĕчĕк пĕрчĕсем вĕçме тытăнсан
Куçа уçма та, сывлама та çук!..
Çил-тăвăл иртсе сывлăш лăплансан
Çав хăйăр хирех йăлтах урăхла:
Пĕрчĕсем — çĕрте, çанталăк — аван;
Хăйăр çийĕпех утса пымалла...
Çынпа хăйăрăн пĕр пеклĕхсем пур:
Пĕр çын — вăйлă мар, халăх — кӳл тăвать!
Пăлхав-вăрçă чух — ăна пăх та кур:
Халăх хĕвĕшет,— ватать, çавăрать.
Лăплантăр халăх — пурнăç тăп-тăпах:
Кашни уйрăм çын, хăйăр пек, шăпах.

1921

*Элкер, С. Çынпа хăйăр : [сăвă] // Элкер, С. Хурапа шурă. Тĕрлĕ вăхăтра çырнисем : проза, поэзи, аса илӳсем, кун кĕнекинчен, çырусем, хаклавсем / С. Элкер ; В. Г. Родионов пухса йĕркеленĕ. – Шупашкар, 1994. – С. 234.*